42-60
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ экземпляры в количестве 5 экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ 3 августа 1942 г.
Подпись

# АНГЛИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧЕ 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче ТУНĂ ДОГОВОРА РАТИФИКАЦИЛЕНИ

Ратификация англо-советского договора 26 мая 1942 года

Хакĕ 15 пус

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

**«ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ТАТА УНПА ПĔРЛЕ ВĂРÇАКАН ÇĔРШЫВСЕНЕ ХИРĔÇ ПЫРАКАН ВĂРÇĂРА СОЮЗЛĂ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН, ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂН ПĔР-ПĔРИНПЕ КИЛĔШТЕРСЕ ĔÇЛЕСЕ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШСА ТĂРАССИ ÇИНЧЕН СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔПЕ ВЕЛИКОБРИТАНИРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ КОРОЛЕВСТВО ХУШШИНЧЕ ТУНĂ ДОГОВОРА» РАТИФИКАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН**

**Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ СССР Верховный Советĕнче 1942 çулти июнĕн 18-мĕшĕнче тунă доклад**

---

**Депутат юлташсем!**

Правительство Англипе Совет Союзĕ хушшинче майăн 26-мĕшĕнче Лондонра тунă Договора пăхса тухма тата ратификацилеме Верховный Совета тăратма кирлĕ тесе шутларĕ. Çакна ăна Договор политикăллă питех те паха вырăн йышăнса тăнă пирки тунă. Договор Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче пулса тăнă туслă çыхăнусене тата гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре пĕр-пĕрне çар тĕлĕшпе паракан пулăшăва çирĕплетет тата çав çыхăнусене çирĕп союз туса хурать. Çавăн пекех тата Договор вăрçă хыççăнхи тапхăрта Англипе пĕрле тумалли пирĕн ĕçсен пĕрлĕхлĕ çулйĕрне палăртса хурать. Хăйĕн мĕнпур содержанийĕпе Договор Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем аталанса пырас ĕçре кăна мар, çакăнпа пĕрлех вăл тата Европăри пĕтĕм халăхсем хушшинчи мĕнпур çыхăнусем малалла аталанса пырас ĕçре те политикăллă пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать.

Англипе Совет Союзĕ хушшинчи Договор тата эпĕ, Совет Правительстви хушнă тăрăх, Лондонпа Вашингтонра туса ирттернĕ калаçусен результачĕсем Совет Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслă çыхăнусем вăйлăн çирĕпленнине кăтартса параççĕ. Гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн чи пысăк йывăрлăхĕсене хăйсем çинче тӳссе ирттерекен Совет Союзĕнчи халăхсемшĕн çакă вăл Германи захватчикĕсене çĕнтерес ĕçе мĕн чухлĕ ытларах хăвăртлатать, çавăн чухлĕ ытларах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Договор, Лондонпа Вашингтонра туса ирттернĕ калаçусен ытти результачĕсем пекех, гитлерла Германие

тата Европăри агресси тĕлĕшпе Германипе çыхăннă çĕршывсене çапса аркатас ĕçе хăвăртлатма тивĕçлĕ, çакăнпа пĕрлех тата Договорпа калаçусен результачĕсем ССР Союзĕпе Великобритани хушшинчи туслă çыхăнусене, çавăн пекех пирĕн икĕ çĕршывпа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслă çыхăнусене малалла аталантармашкăн шанчăклă никĕс пулса тăрĕç. Договор тата хальхи вăрçăн питех те кирлĕ чылай ыйтăвĕсем тăрăх, вăрçă хыççăн пĕрле ĕçлес ыйтусем тăрăх Совет Союзĕпе Англи хушшинче, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинче калаçса татăлни хальхи вăхăтра Совет Союзĕпе Англи тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем ертсе пыракан ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем хушшинчи боевой туслăх çирĕпленнине пĕлтерет.

Эпĕ Сире Англипе Совет Союзĕ хушшинче майăн 26-мĕшĕнче Договор тăвас умĕн пулса иртнĕ событисене, Совет Союзĕпе Великобритани хушшинчи çĕнĕ, туслă çыхăнусем аталанса пырас ĕçре тĕп тапхăрсем пулса тăнăскерсене, аса илтерĕп.

Çакă паллă, Германия Совет Союзĕ çине тапăннă кунах — пĕлтĕрхи июнĕн 22-мĕшĕнче—Великобританин премьер-министрĕ г. Черчилль çирĕппĕн çапла пĕлтерчĕ: Германи захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра Англия, Совет Союзне пулăшу парать, мĕншĕн тесен Англи халăхĕ гитлерла Германие çапса аркатассине Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле тумалли пĕрлĕхлĕ задача тесе шутлать, терĕ. (*Алă çупаççĕ*). Çакăн хыççăн Англин Мускаври посолĕпе—Криппс господинпа пулса иртнĕ калаçусем,—вăл калаçусенче Сталин юлташ питех те активлăн хутшăнса ĕçлерĕ,—Англипе Совет Союзĕ хушшинче 1941 çулти июлĕн 12-мĕшĕнче тунă паллă килĕшĕве алă пусасси патне илсе çитерчĕç. Çав килĕшӳре ССР Союзĕпе Великобритани правительствисем гитлерла Германие хирĕç пыракан çак вăрçăра пĕр-пĕрне пур тĕрлĕ пулăшу та парса тăма сăмах пачĕç, çавăн пекех тата иккĕшĕ пĕр-пĕринпе калаçса татăлмасăр гитлерла Германипе нимĕнле калаçусем те тумалла мар тесе, перемири те, мир те тумалла мар тесе сăмах пачĕç.

Çав килĕшӳ Гитлерăн хăйĕн противникĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмалли планĕсене тата противниксенчен кашнине хирĕç пĕчченшерĕн кĕрешес ĕмĕтне аркатса ячĕ.

Иртнĕ çулти июлĕн 12-мĕшĕнче Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем аталанса пырас ĕçре çавăрăну пулса иртрĕ. Ун чухне пирĕн çĕршывсем хушшинчи туслăхăн никĕсне, пирĕн пĕтĕмĕшлĕ ылханлă тăшмана хирĕç пирĕн халăхсен аслă малашлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пĕр-пĕрне пулăшса пырас ĕçĕн никĕсне хывнă.

Англипе Совет Союзĕ хушшинчи, çакăнпа пĕрлех тата Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусем аталанса пынин тепĕр тапхăрĕ вăл Великобританин представителĕ г. Бивербрук тата США представителĕ г. Гарриман хутшăннипе Мускавра пулса иртнĕ виçĕ державăн паллă конференцийĕ, хăйĕн ĕçĕсене пĕлтĕрхи октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕçленĕскер, пулса тăрать. Çав конференцире Совет Союзне Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен вăрçă хатĕрĕсем тăратмалли плана тунă. Çакна пула танксем, самолетсемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем, çавăн пекех тата алюминий, никель, каучукпа ытти çавăн пек дефицитлă материалсем Совет Союзне Мускаври конференцире тунă пысăк программа тăрăх килсе тăма тытăнчĕç.

Пирĕн, паллах, çакна асра тытмалла, Совет Союзне хĕçпăшалсемпе материалсем илсе çитересси чылай йывăр ĕç пулса тăнă тата пулса тăрать те. Атлантика океанĕнче вăрă-хурахла, пиратла ĕçсем туса çӳрекен Германин çар карапĕсем, Германин подводнăй лодкисемпе самолечĕсем Совет Союзне хĕçпăшал турттарса килекен суднăсем çине тăтăшах пыра-пыра тапăнаççĕ. СССР валли грузсем турттарса килекен хăшпĕр суднăсем, вĕсене пирĕн союзниксен тинĕс-çар вăйĕсем хӳтĕлесе пынă пулин те, Мурманскпа Архангельск çулĕсем çинче пĕтнĕ. Анчах çапах та Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англирен хĕçпăшалсемпе материалсем тăратас ĕç пĕчĕкленмен кăна мар, юлашки уйăхсенче вăл чылай вăйланнă. Хĕрлĕ Çар хăйĕн ытларахăш пайĕпе хамăрăн шалти ресурссенчен илекен хĕçпăшалпа снабжени çумне çав поставкăсем çĕнĕрен питех те кирлĕ хĕçпăшалсемпе материалсем хушса параççĕ. Çав поставкăсене халĕ те, çавăн пекех малашне те ӳстерсе тата лайăхлатса пырассишĕн эпир çине тăрсах тăрăшма кирлĕ тесе шутланă тата шутлатпăр та. Тата çакна та йышăнмалла, çав поставкăсене малалла туса пыни ССР Союзĕпе Англи тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслă çыхăнусене çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк

вырăн йышăнса тăнă тата малашне те çавăн пекех пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем аталанса пынин тепĕр паллă тапхăрĕ вăл Мускава иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче Великобританин Ютçĕршыв Ĕçĕсен министрĕ г. Иден килни тата Сталин юлташ унпала, эпĕ хутшăннипе, туса ирттернĕ ăнăçлă калаçусем пулса тăраççĕ. Çав калаçусем кайран малалла аталанса пычĕç. Çакăнпа пĕрлех, нумай мар вăхăт иртсен, калаçусем татăклă та ăнăçлă результатсем патне илсе çитересси паллă пулса тăчĕ.

Унтан вара апрель уйăхĕнче Британи правительстви Совет правительствине çав калаçусене вĕçне çитерме тата договорăн тивĕçлĕ проектне сӳтсе-явма мана Лондона ямашкăн сĕнӳ пачĕ.

Çав вăхăтрах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ Сталин юлташа çарпа политика тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ тата ниепле те кая хăвармалла мар ыйтусем тăрăх калаçса татăлма мана Вашингтона ямашкăн сĕнӳ пачĕ.

Эсир пĕлетĕр, эпĕ, çывăх сотрудниксен группипе пĕрле, кайса килтĕм, эпĕ Лондонра—г. Черчилльпе, г. Иденпа тата Британи правительствин ытти деятелĕсемпе, çавăн пекех тата Вашингтонра г. Рузвельтпа, г. Гопкинспа, г. Хэллпа тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ертсе пыракан ытти представителĕсемпе те чылай вăхăт хушши туслăн калаçрăм. Çав калаçусене Лондонра совет посолĕ Майский юлташ, Вашингтонра—совет посолĕ Литвинов юлташ хутшăнчĕç. Кунсăр пуçне, вăрçă стратегийĕн ыйтăвĕсене сӳтсе-явнă çĕре Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар штабĕсен пур начальникĕсем те, çавăн пекех тата Совет Союзĕн тивĕçлĕ çар представителĕсем те çывăххăн хутшăнса ĕçлерĕç.

Ăнăçлă калаçусем хыççăн майăн 26-мĕшĕнче Лондонра «Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Великобританири Пĕрлешӳллĕ Королевство хушшинче тунă Договора» алă пуснă.

Договор икĕ пайран тăрать: пĕрремĕш пайĕнче икĕ статья, вĕсем гитлерла Германие хирĕç вăрçă пынă тапхăрта ССР Союзĕпе Великобритани пĕр-пĕринпе мĕнле

ҫыхӑнса ӗҫлемеллине палӑртаҫҫӗ, иккӗмӗш пайӗ вара вӑрҫӑ хыҫҫӑн икӗ ҫӗршыв пӗр-пӗринпе мӗнле ҫыхӑнса ӗҫлессине палӑртакан статьясенчен тӑрать.

Договорӑн пӗрремӗш пайӗ пирки ҫакна каламалла, вӑл пӗтӗмӗшпе илсен, Англипе Совет Союзӗ хушшинче иртнӗ ҫулти июлӗн 12-мӗшӗнче тунӑ паллӑ килӗшӗвӗн содержанине тепӗр хут палӑртса тухать, ҫав килӗшӗве формальнӑй договор туса хурать. Пӗлтӗрхи килӗшӗве тӗрӗслесе палӑртса, договорӑн ҫав пайӗ Германие хирӗҫ кӑна мар, ҫавӑн пекех тата «Европӑри агрессиллӗ ӗҫсенче унпа ҫыхӑннӑ мӗнпур государствӑсене» хирӗҫ те пӗр-пӗрне ҫар тӗлӗшпе тата ытти тӗлӗшпе те пулӑшу парса тӑрасси ҫинчен калать.

Договорӑн иккӗмӗш пайӗ, пӗрремӗш пайӗпе танлаштарсан, ҫӗнӗ пулса тӑрать. Договорӑн ҫав пайӗн пӗлтерӗшӗ, чи малтан, ҫакӑнта: унта ССР Союзӗпе Великобритания вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе туслӑн килӗштерсе ӗҫлессин тӗп принципӗсене малтанхи хут туса палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех тата икӗ ҫӗршывӗ те мир тунӑ чухне тата вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта пӗрлешнӗ ытти ҫӗршывсемпе килӗштерсе ӗҫлессине те палӑртса хунӑ, ҫакӑнпа пӗрлех ҫавӑн пек килӗштерсе ӗҫлессине паллӑ Атлантика хартийӗн тӗп положенисем тӑрӑх йӗркелеме шутласа хунӑ,— Атлантика хартийӗ ҫумне хӑй вӑхӑтӗнче ССР Союзӗ те пӗрлешрӗ. Иккӗленмелли ҫук, ҫакнашкал килӗшӳ мӗнпур Европа малалла аталанас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Икӗ ҫӗршывӗ те «Европӑра хӑрушсӑрлӑх тата экономика енчен чечекленсе ӳсессине организацилес тесе, мир тунӑ хыҫҫӑн та пӗр-пӗринпе таччӑн тата туслӑн пӗрлешсе ӗҫлеме килӗшӳ турӗҫ». Договорта ҫапла каланӑ: икӗ ҫӗршывӗ те «пӗрлешнӗ нацисем малта кӑтартнӑ тӗллевӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшӗнчи интересӗсене шута илӗҫ тата ҫавӑн пек икӗ принцип тӑрӑх кашни хӑйшӗн территори йышӑнса илме тӑрӑшмалла мар тата ытти государствӑсен шалти ӗҫӗсене хутшӑнмалла мар текен принципсем тӑрӑх ӗҫлесе пырӗҫ». Договорӑн ҫав принципӗсем СССР Правительствин пуҫлӑхӗ Сталин юлташ иртнӗ ҫулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ паллӑ заявленипе пӗтӗмӗшпех килӗшсе тӑраҫҫӗ:

«Ют территорисене тытса илес, ют халӑхсене пусмӑра чикес тӗллевсем вӑрҫӑра пирӗн ҫук тата пулма та

пултараймаççĕ, — сăмах кунта Европăри халăхсемпе территорисем çинчен пырать-и, е Азири, çав шутрах Иранри, халăхсемпе территорисем çинчен пырать-и, — çакă вăл пурĕ пĕрех».

Кашни хăйшĕн территори йышăнса илме тăрăшманнине тата ытти государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнма шутламаннине палăртса, Совет Союзĕпе Великобритания ирĕклĕхе юратакан пур халăхсем тĕлĕшпе те хăйсем енчен туслă принципсем тытасси çинчен пĕлтереççĕ, çакăнпа пĕрлех тата вĕсен политики ытти халăхсен территорийĕсене тытса илессишĕн тата вĕсене чуралантарассишĕн вăрçакан гитлерла Германин агрессиллĕ политикинчен тĕпренех уйăрăлса тăнине кăтартса параççĕ. Çакна май фашистла захватчиксене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан пирĕн отечественнăй вăрçăн тĕллевĕсем çинчен Сталин юлташ пĕлтĕрхи июлĕн 3-мĕшĕнчех Совет Союзĕнчи халăхсене чĕнсе каланă сăмахĕсене аса илтерме тивĕçлĕ:

«Хамăр тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пыракан пирĕн вăрçă Европăпа Америкăри халăхсем хăйсем никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн туса пыракан кĕрешӳпе пĕрлешсе каять. Çакă вăл Гитлерăн фашистла çарĕсем чуралантарнине хирĕç тата чуралантарас хăрушлăха хирĕç, ирĕклĕхшĕн тăракан халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ пулĕ». (*Алă çупаççĕ*).

Договорăн çӳлте кăтартнă тĕллевĕсемпе принципĕсем тăрăх унта çапла каланă: икĕ правительстви те «вăрçă хыççăн мирлĕ пурăнмашкăн тата агрессие хирĕç тăмашкăн пĕрлешсе тумалли ĕçсем çинчен калакан сĕнӳсене йышăнас тĕлĕшпе хăйсемпе пĕр пек шухăшлакан ытти государствăсемпе пĕрлешесшĕн» тăрăшаççĕ, çавăн пекех тата вăрçă хыççăн «Германия е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă кирек мĕнле государство та малашне урăх агресси тума тата мире пăсма ан пултартăр тесе» тăрăшаççĕ.

Йкĕ çĕршывĕ те тата çакăн пирки калаçса татăлнă: вăрçă хыççăн вĕсенчен пĕрне Германия е агрессиллĕ ытти государство тапăнсан, тепĕр енĕ «çавăн пек майпа вăрçă ĕçĕсене хутшăнмалла пулнă енне çийĕнчех, хăйĕн власĕнчен килнĕ таран, çар тĕлĕшпе тата ытти тĕлĕшпе те пур тĕрлĕ пулăшу та парать». Пĕр-пĕрин тĕлĕшпе илнĕ çак обязательство уçăмлă та татăклă пулни пирĕн çĕршывсемшĕн, çак вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçленĕ хыççăн çирĕп

мир тăвассишĕн тăрăшаканскерсемшĕн, питĕ паха пулса тăрать.

Тата çакă паха пулни пуриншĕн те ăнланмалла: икĕ правительство та вăрçă хыççăнхи тапхăр тĕлĕшпе илнĕ мĕнпур обязательствăсем вăраха пыччăр тесе калаçса татăлнă. Ку тĕлĕшпе 20 çуллăх срок кăтартса панă тата вăл срока малалла та тăсма пуррине палăртса хунă.

Тата çапла ыйтаççĕ: Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче çак пичетлесе кăларнă договорсăр пуçне мĕнле те пулин секретлă килĕшӳ туман-и? теççĕ. Пĕтĕм ответлăха хам çине илсе эпĕ çапла калатăп: çавăн пек шухăшлама нимĕнле сăлтав та çук, Англипе Совет Союзĕ хушшинче нимĕнле секретлă килĕшӳ те туман, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе Америка хушшинче те нимĕнле секретлă килĕшӳ те туман. Çаксене каланă хыççăн ĕнтĕ господин Иденăн договора алă пуснă чухне каланă çак сăмахĕпе килĕшмесĕр тăма çук:

> «Пирĕн икĕ çĕршывăн историйĕнче пирĕн пĕрлешӳ нихăçан та хальхи пек çирĕп пулман. Пулас пурнăç пирки эпир нихăçан та пĕр-пĕрин çине хальхи пек уçăмлă обязательствăсем илмен. Çакă, паллах, лайăх пуласса пĕлтерекен телейлĕ япала пулса тăрать».

Çак договора Совет Союзĕнче те, Англире те кăмăлларĕç. Германин фашистла захватчикĕсене, пусмăрçисене хирĕç пыракан кĕрешӳре икĕ çĕршывăн туслăхне тата вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетнине икĕ çĕршыври халăхăн йышлă массисем хĕрӳллĕн ырларĕç, ăна хапăл турĕç. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем (Лондонри калаçу мĕнле пыни çинчен тата договор туни çинчен вĕсене вăхăтра пĕлтернĕ), тата ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсем те, гитлерла йыткĕтевĕсем пусмăрланине тата асаплантарнине тӳссе курнăскерсем, е çавăн пек пулас хăрушлăхра тăраканскерсем, пирĕн Англипе тунă договора кăмăлласа йышăнчĕç. Пирĕн тăшмансен лагерĕнче вара, Германи фашисчĕсен тата вĕсемпе пĕрле вăрçаккансен лагерĕнче, договор тунă пирки йăлтах çухалса кайнă, çилленсе чашкăраççĕ. Пирĕн тăшмансен лагерĕ ĕç ун пек пуласса пĕре те кĕтмен. Апла пулсан, çак договор пирĕн тӳрĕ, тĕрĕслĕхлĕ, ирĕке кăлармалли ĕçе тата ытларах пулăшса тăрĕ. (*Нумайччен алă çупаççĕ*).

Договорăн ыйтăвĕсем питĕ паха ыйтусем пулса тăраç-

çĕ, Лондонри калаçусенче вĕсене питĕ тимлĕн сӳтсе-явнă, анчах, апла пулсан та (эсир ăна пĕлетĕр), вăл калаçусенче çав кăтартнă ыйтусене çеç сӳтсе-явман. Лондонра та, Вашингтонра та ытти паха ыйтусене те сӳтсе-явнă. Сăмах кунта пуринчен ытла эпир гитлерла Германие хирĕç туса пыракан вăрçăн чи кирлĕ ыйтăвĕсемпе таччăн çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен пырать.

Европăра иккĕмĕш фронт тăвас ыйтусем çинчен, паллах ĕнтĕ, Лондонри калаçусенче те, Вашингтонри калаçусенче те нумай калаçнă. Çав калаçусем мĕнпе вĕçленни çинчен Англипе Совет Союзĕн коммюникинче те, Совет Союзĕпе Америкăн коммюникинче те пĕр пек формăпа каласа панă. Икĕ коммюникинче те çапла каланă: çав калаçусенче «Европăра 1942 çулта иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем пирки пĕтĕмпех калаçса татăлнă», тенĕ. (*Нумайччен ала çупаççĕ*). Çавăн пек калани Совет Союзĕнчи халăхсемшĕн питĕ те паха, мĕншĕн тесен Европăра иккĕмĕш фронт туни пирĕн фронтра гитлерла çарсем валли çĕнтерме çук йывăрлăхсем туса хурать. Виçĕ аслă держава вăрçă тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ытларах та ытларах килĕштерсе ĕçленин результатне пирĕн пĕрлехи тăшман часах хăйĕн çӳрăмĕ çинче тӳссе курасса шанса тăратпăр. (*Тăвăллăн, нумайччен ала çупаççĕ*).

Кунсăр пуçне, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тата Англирен Совет Союзне çар хатĕрĕсем тăратассине малалла лайăхлатас тата ӳстерес ыйтусене сӳтсе-явнă. Çак тĕлĕшпе те ĕç ăнăçлă пулни çинчен ĕнентерсе калама пулать. Союзниксем Совет Союзне çар хатĕрĕсемпе снабжени тăратасси çак çулталăкăн иккĕмĕш çурçулĕнчен пуçласа ӳсет тата хăвăртланать. (*Ала çупаççĕ*). Ку вăл, чи малтан, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен илсе килекен хатĕрсем ӳссе пынинчен курăнать. Пурте пĕлеççĕ, пĕлтĕрхи ноябрьте Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзне тăратакан çар хатĕрĕсемшĕн тӳлемешкĕн пĕр миллиард долларлăх заем памалла тунă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çар хатĕрĕсем тăратмалли çĕнĕ программăра çав хатĕрсен пĕтĕм сумми виçĕ миллиард долларлăх пулмалла туса хунă. (*Ала çупаççĕ*). Çапла ĕнтĕ, Совет Союзне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çарпа экономика тĕлĕшĕнчен паракан пулăшу малалла нумай ӳсмеллине куратпăр тата Англи те çар хатĕрĕсем тăратас ĕçе малалла лайăхлатса пыма килĕшнине куратпăр.

Çакна май Вашингтонра кăçалхи июнĕн 11-мĕшĕнче алă пуснă килĕшӳ—«Агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем хушшинче тунă Килĕшӳ» питĕ паха пулнине палăртмалла, вăл килĕшĕве Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи хушшинче тунă килĕшӳ евĕрлĕ тунă. Çак Килĕшӳ вăл малтанлăха йышăннă килĕшӳ шутланать, вăл икĕ правительство хушшинче çак ыйту тĕлĕшпе малашне тумалли килĕшӳ никĕсĕсене çеç палăртса парать. Совет Союзĕпе Америка хушшинчи килĕшӳн пахалăхĕ çакă пулса тăрать: вăл гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинче боевой туслăх пулса тăнине йышăннинчен тухса тăрать çеç мар, вăл тата вăрçă хыççăнхи тапхăрта икĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине те палăртса хурать. Çав килĕшӳ вăл вăрçă хыççăн мире çирĕпрех тăвас шутпа тĕнчери çыхăнусене лайăхлатмалли çинчен Совет Союзĕпе США пĕр-пĕринпе калаçса татăлнине пĕлтерет. Çавăнпа та Вашингтонра тунă килĕшӳ Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕшĕн те, ытти халăхсемшĕн те питĕ паха пулса тăрать.

Юлашкинчен, Вашингтонра та, Лондонри пекех, ирĕке юратакан халăхсемшĕн вăрçă хыççăн мирпе хăрушсăрлăх туса хурас ĕçре Совет Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕрле килĕштерсе ĕçлессин тĕп ыйтăвĕсене те сӳтсе явнă. Çак ыйту тĕлĕшпе те, пирĕн хушăри çыхăнусен ытти тĕп ыйтăвĕсем тĕлĕшпе пулнă пекех, икĕ енĕ те хăйсем пĕр-пĕрне ăнланнине тата хăйсен шухăшĕсем пĕр пек пулнине ăшă кăмăлпа палăртнă.

Çакна пĕлтерме тивĕçлĕ тесе шутлатăп: мана, СССР представительне, Лондонра та, çавăн пекех Вашингтонра та питех те ырă кăмăлпа тата чĕререн йышăнса хăналантарчĕç.

США Президенчĕ г. Рузвельт тата Британи Премьер-Министрĕ г. Черчилль çак ĕçпе хăйсем интересленнине тата калаçусене активлăн хутшăннине уйрăмах асăнса хăварма тивĕç, çавăншăн эпĕ вĕсене пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. (*Нумайччен алă çупаççĕ*).

Çаксенче пуринче те эпир Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери позицийĕ тĕрекленнине куратпăр. Сталин юлташ майăн пĕрремĕшĕнчи приказра каланă çак сăмахсене çĕнĕрен те çĕнĕ фактсем çирĕплетсе параççĕ:

«Пирĕн тăван çĕршыв ытти çĕршывсемпе çыхăнса тăрассине илес пулсан, çак çыхăнусем вара юлашки вăхăтра нихăçанхинчен те ытларах тĕрекленсе, ӳссе кайрĕç. Нимĕç империализмне хирĕç ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пĕрлешрĕç. Вĕсем Совет Союзĕ çине тимлĕн пăхса тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн, чыслăхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешни пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхе тĕлĕнтерсе савăнтарать. Ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем Совет Союзĕ çине тĕнчене гитлерла чумаран хăтарса хăварма пултаракан вăй çине пăхнă пек пăхаççĕ. Çак ирĕклĕхе юратакан çĕршывсем хушшинче малти вырăна Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем йышăнса тăраççĕ, вĕсемпе эпир туслă тата союзлă çыхăну тытса тăратпăр, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре вĕсем пирĕн çĕршыва вăрçă туса пыма ытларах та ытларах пулăшу парса тăраççĕ».

Договор, çавăн пекех Лондонра тата Вашингтонра калаçнисен результачĕсем те Совет Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслăхпа союз тĕрекленсе тата тачăрах пĕтĕçсе пынине кăтартса параççĕ. Çакă вара ирĕклĕхе юратакан халăхсен ылханлă тăшманне хирĕç пыракан кĕрешӳре, Гитлерпа унăн юнлă хӳрешкисене хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсене тата унăн вăйне пĕтĕм тĕнчери халăхсем йышăннине кăтартса парать. Çакă вара пирĕн правительствăн тулашри политики тĕрĕс пулнине çирĕплетсе парать, Гитлерла кĕтӳсене çĕмĕрсе тăкассине хăвăртлатас тата вĕсене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларас тесе, хăйсен пурнăçĕшĕн тата телейлĕ пуласлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пĕрлешнĕ ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен ĕçе çĕнтертĕр тесе, пирĕн правительство Великобританипе, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тата ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсемпе туслă çыхăнса тăрассине тĕреклетсе пырассишĕн пĕрмаях тăрăшать. (*Нумайччен алă çупаççĕ*).

Англипе тунă договор, çавăн пекех Лондонра тата Вашингтонра пулнă калаçусен результачĕсем те пирĕн шанчăка, Хĕрлĕ Çарăн тата совет халăхĕн шанчăкне çирĕплетеççĕ, гитлерла çар противникĕсен пĕрлешӳллĕ вăйĕсем ытларах та ытларах ӳссе тата пĕтĕçсе пынине эпир

шанса тăратпăр. Договорпа калаçусен результачĕсем Германи захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас вăхăт çывхарса килнине, халĕ ĕнтĕ Германин вăрă-хурахла империализмне çĕнтерессе чылай хăвăртланнине эпир шанса тăрассине çирĕплетеççĕ. (*Алă çупаççĕ*).

Тĕрекленсе пыракан Хĕрлĕ Çар, никам аркатайми Совет тылĕ тата пирĕн союзниксен çар тĕлĕшпе ӳссе пыракан хăвачĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсен планĕсене пурне те йăлтах çĕмĕрсе тăкĕç. Пирĕн вăйсем тĕрекленеççĕ, хамăр çĕнтерессине эпир нихăçанхи пек мар вăйлăн шанса тăратпăр. (*Алă çупаççĕ*).

Правительство хушнипе эпĕ Верховный Совета çирĕплетме тăратнă договора, Совет халăхĕн интересĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăраканскере, ратификацилеме сĕнӳ паратăп. (*Нумайччен алă çупаççĕ*).

Ленинăн—Сталинăн Аслă ялавĕ айĕнче тăрса эпир Германи фашизмне хирĕç, ирĕклĕхшĕн паттăр кĕрешӳ туса пыратпăр. Ленинăн—Сталинăн Аслă ялавĕ айĕнче тăрса эпир çак кĕрешĕве татăклă çĕнтерӳ тăвичченех, пирĕн çĕршывпа ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм халăхсен ĕçĕ çĕнтеричченех туса пырăпăр. (*Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, „Сывă пултăр Сталин юлташ!" тесе кăшкăраççĕ*).

---

## ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ТАТА ЕВРОПĂРИ УНПА ПĔРЛЕ ВĂРÇАКАН ÇĔРШЫВСЕНЕ ХИРĔÇ ПЫРАКАН ВĂРÇĂРА СОЮЗЛĂ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН, ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂН ПĔР-ПĔРИНПЕ КИЛĔШТЕРСЕ ĔÇЛЕСЕ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШСА ТĂРАССИ ÇИНЧЕН СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔПЕ ВЕЛИКОБРИТАНИРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ КОРОЛЕВСТВО ХУШШИНЧЕ ТУНĂ ДОГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ тата

Унăн Величестви—Великобританин, Ирландин тата Британи тинĕсĕсен хыçĕнчи çĕрсен Королĕ, Инди Императорĕ,

Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Пĕрлешӳллĕ Королевствăри Унăн Величествин Правительстви хушшинче 1941 çулти июлĕн 12-мĕшĕнче Мускавра алă пусса тунă килĕшĕвĕн условийĕсене тепĕр хут çирĕплетсе хурас тата ăна формальнăй договорпа улăштарас тесе,

Вăрçă хыççăн мире сыхласа тăрас ĕçе тата Германия е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă государствăсем малашне татах агресси тăвассине пĕтерсе лартас ĕçе пулăшас тесе,

Малалла, мирлĕ договор тунă чухне тата ун хыççăнхи реконструкци тапхăрĕнче, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Великобританин Премьер-Министрĕ 1941 çулти августăн 14-мĕшĕнче тунă декларацире,—вăл деклараци çумне Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви те хутшăннă,—каласа панă принципсем тăрăх тăвас реконструкци тапхăрĕнче хăйсем пĕрпĕринпе тата ытти пĕрлешнĕ нацисемпе таччăн çыхăнса ĕçлесшĕн пулнине кăтартса парас тесе,

Юлашкинчен, Германия е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă кирек мĕнле ытти государство та çак пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пĕрин çине тапăнас пулсан, пĕр-пĕрне пулăшмалла тăвас тесе,

Çав ĕçсене тумашкăн пĕр-пĕринпе договор тума шут тытнă тата хăйсен полномочнăй представителĕсем пулма çаксене уйăрса хунă:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ—Вячеслав Михайлович Молотова, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне,

Унăн Величестви—Великобританин, Ирландин тата Британи тинĕсĕсен хыçĕнчи çĕрсен Королĕ, Инди Императорĕ, Великобританири Пĕрлешӳллĕ Королевствăпа Çурçĕр Ирланди ячĕпе—хисеплĕ Антони Идена, Парламентăн членне, Унăн Величествин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрне;

Çак çынсем хăйсен тивĕçлĕ формăпа çырса хатĕрленĕ полномочийĕсене кăтартнă хыççăн пĕр-пĕринпе çакăн пирки килĕшсе татăлнă:

## I ПАЙ.

**1-мĕш статья.** Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Королевство пĕр-пĕринпе тунă Союз тăрăх, Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсем Германие хирĕç тата Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă мĕнпур государствăсене хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне çар тĕлĕшпе тата ытти тĕлĕшпе те пулăшу парса тăма тата тĕрлĕ майпа пулăшса тăма пĕр-пĕрне сăмах параççĕ.

**2-мĕш статья.** Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсем—гитлерла правительствăпа е Германин кирек-мĕнле ытти правительствипе те, агрессиллĕ шухăшсене пурне те уççăнах пăрахманнипе, нимĕн пирки те калаçма тытăнмастпăр тесе тата пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлмасăр Германипе е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă кирек мĕнле ытти государствăпа та перемири е мир çинчен калаçмастпăр, е перемири е мирлĕ договор тумастпăр, тесе сăмах параççĕ.

## II ПАЙ.

**3-мĕш статья.**

1. Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: вĕсем вăрçă хыççăн мирлĕ пурăнмашкăн тата агрессине хирĕç тăмашкăн пĕрлешсе тумалли ĕçсем çинчен калакан сĕнӳсене йышăнас тĕлĕшпе хăйсемпе пĕр пек шухăшлакан ытти государствăсемпе пĕрлешесшĕн.

2. Çавăн пек сĕнӳсене ырласа йышăниччен, Германия е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă кирек мĕнле государство та малашне урăх агресси тума тата мире пăсма ан пултартăр тесе, вĕсем вăрçă ĕçĕсем пĕтнĕ хыççăн, хăйсен влаçĕнчен килекен пур мерăсене те йышăнса хурĕç.

**4-мĕш статья.** Вăрçă хыççăнхи тапхăрта, Германия е кирек мĕнле ытти государство та, 3-мĕш статьяра (2-мĕш пунктра) кăтартнăскер, пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пĕрин çине тапăннă пирки çав Енĕн çĕнĕрен Германие е кирек мĕнле ытти государствăна та хирĕç вăрçă ĕçĕсене хутшăнмалла пулсан, Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен тепĕри çавăн пек майпа вăрçă ĕçĕсене хутшăнмалла пулнă Енне çийĕнчех, хăйĕн влаçĕнчен килнĕ таран, çар тĕлĕшпе тата ытти тĕлĕшпе те пур тĕрлĕ пулăшу та парать.

Ку статья Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсем—3-мĕш статьяра (1-мĕш пунктра) кăтартнă сĕнӳсене йышăннă пирки вăл ĕнтĕ кирлĕ мар пулса тăчĕ, тесе шутличченех хăйĕн вăйне çухатмасть. Çавăн пек сĕнӳсене йышăнман пулсан, вăл статья ун хыççăн тата 20 çуллăха сыхланса юлать, вăл Пĕр-пĕринпе Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен кирек хăшĕ те 8-мĕш статьяра кăтартнă условисем тăрăх ăна пăрахăçличченех сыхланса юлать.

**5-мӗш статья.** Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем, хӑйсен кашнин хӑрушсӑрлӑхӗн интересӗсене шута илсе, мир тунӑ хыҫҫӑн Европӑра хӑрушсӑрлӑх тата экономика енчен чечекленсе ӳсессине организацилес тесе, мир тунӑ хыҫҫӑн та пӗр-пӗринпе таччӑн тата туслӑн пӗрлешсе ӗҫлеме килӗшрӗҫ. Вӗсем пӗрлешнӗ нацисен малта кӑтартнӑ тӗллевӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшӗнчи интересӗсене шута илӗҫ тата ҫакӑн пек икӗ принцип тӑрӑх кашни хӑйшӗн территори йышӑнса илме тӑрӑшмалла мар тата ытти государствӑсен шалти ӗҫӗсене хушӑнмалла мар текен принципсем тӑрӑх ӗҫлесе пырӗҫ.

**6-мӗш статья.** Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗрне экономика енчен тӗрлӗ кирлӗ пулӑшу парса тӑма килӗшрӗҫ.

**7-мӗш статья.** Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен кашниййӗ Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан тепӗр Аслӑ Енне хирӗҫ пыракан нимӗнле Союз та тумастӑп тата нимӗнле коалицие те хутшӑнмастӑп тесе сӑмах парать.

**8-мӗш статья.** Ҫак договора чи кӗске вӑхӑтрах ратификацилемелле тата ратификациллӗ грамотӑсене Мускаври мӗн май килнӗ таран хӑвӑртрах улӑштарса илмелле.

Вӑл договор ратификациллӗ грамотӑсене пӗр-пӗринпе улӑштарнӑ хыҫҫӑнах пурнӑҫа кӗрет тата ҫавӑн хыҫҫӑн вара Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Правительствипе Пӗрлешӳллӗ Королевствӑри Унӑн Величествин Правительстви Мускавра 1941 ҫулти июлӗн 12-мӗшӗнче алӑ пуснӑ Килӗшӳ вырӑнне пулса тӑрать.

Ҫак договорӑн 1-мӗш пайӗ Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсемпе Германи тата Европӑри агрессиллӗ ӗҫсенче унпа ҫыхӑннӑ державӑсем хушшинче ҫӗнӗрен мир туса хуриччен хӑйӗн вӑйне ҫухатмасть.

Ҫак договорӑн 2-мӗш пайӗ 20 ҫуллӑха юлать. Ун хыҫҫӑн вӑл, Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен пӗри хӑй Договора пӑрахасшӑн пулни ҫинчен ҫав тапхӑр вӗҫӗнче вуник уйӑх малтан пӗлтерсе хумасан, хӑйӗн вӑйне малалла та ҫухатмасть, вӑл вара Пӗр-пӗринпе Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен пӗри хӑй Договора пӑрахӑҫласшӑн пулни ҫинчен 12 уйӑх малтан ҫырса пӗлтеричченех юлать.

Ҫакна ӗнентерсе, малта асӑннӑ полномочнӑй представительсем ҫак Договора алӑ пуснӑ тата ун ҫине хӑйсен пичечӗсене пуснӑ.

Кăна Лондонра 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче вырăс чĕлхипе тата англи чĕлхипе çырса икĕ экземпляр хатĕрленĕ.

Икĕ текст та пĕр пекех законлă шутланаççĕ.

**В. МОЛОТОВ.** **АНТОНИ ИДЕН.**

**ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ТАТА ЕВРОПĂРИ УНПА ПĔРЛЕ ВĂРÇАКАН ÇĔРШЫВСЕНЕ ХИРĔÇ ПЫРАКАН ВĂРÇĂРА СОЮЗЛĂ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН, ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂН ПĔР-ПĔРИНПЕ КИЛĔШТЕРСЕ ĔÇЛЕСЕ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШСА ТĂРАССИ ÇИНЧЕН СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔПЕ ВЕЛИКОБРИТАНИРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ КОРОЛЕВСТВО ХУШШИНЧЕ ТУНĂ ДОГОВОРА РАТИФИКАЦИЛЕССИ**

Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Великобританири Пĕрлешўллĕ Королевство хушшинче Договор туни çинчен Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Вячеслав Михайлович Молотов юлташ пĕлтернине тата Правительство Договора ратификацилеме сĕннине итленĕ хыççăн, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Правительствăн тулашри политикине ырлас.

2. Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Великобританири пĕрлешўллĕ Королевство хушшинче Лондон хулинче 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче тунă Договора ратификацилес.

**СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.**

**СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.**

13 О.Т.К.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 18-мĕш.

Ответ. по выпуску *И. П. Павлов-Пинер*

НТ 529 Подписано к печати 27/VI-42 г. Заказ № 374 Тираж 18000 экз.
Формат бум. 60—92 1/16 Объем 1 печ. лист.

Типография №1 Управ. полигр. пром. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары